К 84.89(=498)
К 27
Ч-50488

Марина Карягина



# Ҫӑкӑрпа сахӑр

Национальная библиотека ЧР
4-050488
ЦЕНТР ЧТЕ

К84.89(=480)
К27

Марина Карягина

# Çăкăрпа сахăр

Калавсемпе сăвăсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2018

УДК 821.512.111-93
ББК 84 (2=635.1) 6-5
К 27

*Кӗнеке алҫырӑвӗ ачасемпе ҫамрӑксем валли
чӑвашла ҫырнӑ произведенисен 2017 ҫулхи конкурсӗнче ҫӗнтернӗ.
Конкурса Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ
2011 ҫулхи июнӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ
постановленипе килӗшӳллӗн йӗркеленӗ.*

**Карягина М.Ф.**
К 27 Ҫӑкӑрпа сахӑр: калавсемпе сӑвӑсем / М.Ф. Карягина. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2018. — 48 с.
ISBN 978-5-7670-2695-1

М.Ф. Карягинӑн кӗнекине калавсемпе сӑвӑсем кӗнӗ. Ҫыравҫӑ ял ачисен пурнӑҫне сӑнласа парать. Чӑваш йӑлипе интересленеҫҫӗ вӗсем, пур хыпара та пӗрремӗш курмаилтме тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫав хушӑрах ашшӗ-амӑшӗн ятне ярасран та шикленеҫҫӗ.

«Чуччу сикни» тата «Уяв парни» калавсенче ачасен чӗрисенче пӗрремӗш черченкӗ туйӑм ҫуралнине кӑтартса панӑ.

Сӑвӑсенче те автор шӑпӑрлансен хавас кӑмӑл-туйӑмне уҫса парать, хӑш-пӗр сӑнарсене питлесе те илет.

4-50488
Национальная библиотека
Чувашской Республики

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84 (2=635.1) 6-5**

© Карягина М.Ф., 2018
© Алексеев А.И., ӳкерчӗксем, 2018
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2018

**ISBN 978-5-7670-2695-1**

# КАЛАВСЕМ



# Ăстиçук

Ăстиçук вăл Шупашкар йытти-ха. Пирĕннисем пурте виçĕ кунлăх хăнана кайрĕç те, хулари инке ăна вăхăтлăх мана парса хăварчĕ. Пăхса тăранмалла мар хитре хăй. Юратмасăр май çук.

Çак ăратлă йыттăн паспорчĕ çине Бонита тесе çырнине пăхмасăр манăн ăна пĕрремĕш кунах Ăстиçук тесе ят пама тиврĕ. Çĕнĕ ятне вăл тӳрех килĕштерчĕ — чĕннĕ-чĕнмен ыткăнса килет. Инке хытарсах хăварчĕ: Бонитăна пӳртре усрамалла, хула апачĕ çеç памалла, вăхăтран-вăхăт кăна уçăлтарма илсе тухмалла. Тĕлĕнмелле! Те чирлекелет вара мăнтарăн, те хула йыттисем çапла йăваш — ăнланса пĕтмерĕм пулин те тĕпчесе тăмарăм. Мана килтисем кукаçипе кукамие патне кайма хушса хăварнă пулин те, ку ачашка йытă çури пĕччен юлма хăрать пуль тесе килтех пурăнма шутларăм. Лешкасри кукаçипе кукамине вăхăтăн-вăхăтăн çеç кайкаласа курăнтăм, хам чиперех иккенне кăтартрăм темелле. Кукамай хăй те тутли çитерме киле-киле çӳрерĕ.

Çĕнĕ ят йытă çури çумне ăнсăртран çыпçăнчĕ тетĕр-и? Çук. Йăлтах хăй айăплă. Пĕр сăмахпа, ăна шăп çапла анчах чĕнме пулать. Нумай сăмахпа каласа парас пулсан… çĕр каçа чăлăм куç хупмасăр калама тивет.

Те ют çĕре хупса хăварнăшăн инкене кӳренчĕ, те хамăрăн мар-ха, юрать терĕ — йытă çури килнĕ-килмен мана шар кăтартма пуçларĕ. Пирвайхи кунах пĕтĕм сĕтел-пукан урисене хăнтăр пек кăшласа пĕтерчĕ. Çак киревсĕр ĕç хыççăн та ман çине куçне мăч хупми ним те мар пăхса тăраять! Эпĕ ăна намăса пĕлтĕр тесе кун пек тума юраманнине çур сехет ăнлантартăм. Питĕ тимлĕ итлерĕ — ним те ăнланмарĕ: хула ачисем хăраххи, чăвашла пач пĕлмест.

Кĕлете кĕрсе лартăм та хам тĕллĕн чылайччен сасса хытарса-хулăмлатса калаçма вĕрентĕм. Усал çын пулчĕ ку тесе хăратăр! Вара вĕр çĕнĕрен ăнлантартăм. Тĕрĕсси-пе, вăрçрăм. Тӳрленчĕ тенĕччĕ. Асту сана!..



Тепӗр кунне ӑна пӑскӑртмаллипех пӑскӑртма тиврӗ. Телевизор яраймастӑп. Лариван тете электрик ҫутта вӑхӑтлӑх чарнӑ пуль тенӗччӗ. Тепӗр сехетрен те, тата тепӗр сехетрен те пулмарӗ. Утюга чиксе пӑхрӑм — вӑл та ӗҫлемест. Мӗн тетӗр? Пирӗн Ӑҫтиҫук тяппи айне пулнӑ мӗнпур провода-пралук таврашне таткаласа тӑкнӑ та киленӗҫлӗн хӳрине пӑлтӑртаттарса тӑрать... Кукамай куҫӗ тӗлне пуличчен йӑлт тирпейлӗн пуҫтартӑм. Чӑн-чӑн ӑҫтиҫук мар-и ӗнтӗ вӑл ҫакӑн хыҫҫӑн?..

Пӗтӗм пӑтӑрмах ҫакӑнпа вӗҫленнӗ пулсан юрӗччӗ-ха. Тепӗр кунне ҫакскер — алӑка темле уҫса хупнӑ вара — киле йӑнкӑл-янкӑл кӑтрашка шурӑ анчӑка кӗртсе янӑ. Иккӗн тан минтер-тӳшеке тустарнӑ кӑна ҫак чиперккесем! Йӑпӑртлӑха кӑна тухрӑм — пӳрт тулли тӗк вӗҫет, мăччаран лӑпӑс-лӑпӑс юр ҫӑвать тейӗн. Диван «хырӑмне» те пӗр кӗтессинчен лаштӑр ҫурса пӑрахнӑ, ӑш-чикне тӑпӑлтарса кӑларнӑ. Сӗтел ҫинчи пӗтӗм савӑт-сапана ҫитти-мӗнӗ ҫӗре сӗтӗрсе антарнӑ. Апайтурах, аннен чи юратнӑ курки чӑл-пар саланнӑ, урайӗнче выртать! Хӑй чее те, манран хӑранипе таҫта пытаннӑ тесеччӗ. Тӳрех паллаймарӑм эпӗ ӑна, урӑх йытта илӗртсе кӗртнӗ тесе йӑнӑшрӑм: хӑймапа-пылпа вараланса пӗтнӗскер ҫумне тӗкмамӑк ҫыпҫӑнса тулнӑ иккен. Те йытӑ ҫури, те... шурӑ хитре арҫури... Ҫитменнине темле майпа асаннен хӗрлӗ шӑрҫине ҫакса янӑ, ман ҫине айӑпсӑр куҫӗпе пӑхса ларать. Хӑть кул, хӑть йӗр...

Тем тесен те, хула апачӗ пӑсать ун юнне. Ҫиесчӗ кукамай пӗҫерсе хӑварнӑ яшкапа пӑтта — ҫук, яхӑнне те пымасть, шӑршласа та пӑхмасть!

Патак парас — шалккӑ. Ҫине-ҫине сӑмахпа ӑнлантарас — пӗр хӑлхинчен кӗрет те тепринчен тухса каять. Итлемен ачисемпе ашшӗ-амӑшӗ ҫапла тертленет пуль ҫав. Эпӗ хама урӑх нихҫан та аслисене итлемесӗр тарӑхтармастӑп тесе сӑмах патӑм.

# Ҫӑкӑрпа сахӑр

Ҫӗр ҫине тӑсӑлса выртса чавсалантӑм та шухӑшла-шухӑшла тӗлӗнсе хытса кайрӑм: пиртен ҫӗр-пин хут вӗтти те пур ҫак тӗнчере! Куҫа аран-аран курӑнакан темле йакӑр-йакӑр чупкӑнсен те, пӑхӑсӑн, хӑйсен патшалӑхӗ! Патши те пур ӗнтӗ вӗсен, йӑли-йӗрки те хӑйсене кура, чиккимӗнӗ, хуралти салтакӗсем... Чат пирӗн пек: хирӗҫкелесе те илеҫҫӗ, йӑлӑнтараҫҫӗ те, унтан пӗр-пӗрин ҫумне тӗршӗнсе лӑпланаҫҫӗ... Кайран каллех темӗн те пӗр сӗтӗрме тапратаҫҫӗ — хырӑм выҫҫи хуран лаҫҫи-им...

— Ҫиессӳ килет-и? — сисмен те Алюш килсе тӑнине.

Хӗвел тӳпене хӑпарса ҫитнине кура тӑркач мӗн ыйтса тӑрать-ши пӗреххут. Куратӑп-ҫке, хӑйӗн те алли пушӑ, кӗсйи ҫурӑк.

— Чӗре сури туса ярсан пӑсмӗччӗ ҫав, — тетӗп асатте пек, хӗвел ҫине ал лаппи айӗн пӑхкаласа. Килте никам та ҫуккине асилетӗп те, хырӑм выҫҫи те иртсе каять.

Алюшӑн йӑлкӑм хура куҫӗнче тем туса пӑрахас шухӑш йӑшкӑшать. Вӑл пахча карти ҫумӗнчи сукмак енне вӗлт те вӗлт пӑхкалать.

Тытӑнчӑклӑ калаҫнӑран эпӗ ӑна тепӗр чухне ӑнланса та пӗтерейместӗп. Те чикан урапи ҫинчен ӳксе юлнӑ чухне айӑпланнӑ ӗнтӗ? Амӑшӗ ачисен йӑм хура ҫӳҫлӗ пуҫӗсене черетпе шакла касса ямассерен: «Манӑн кусем улттӑшӗ те чикан урапи ҫинчен ӳксе юлнӑскерсем», — тенине илтнӗччӗ...

— Чӑкӑт курӑкӗн вӑррине astивсе курнӑ-и эс? — тетӗп Алюшӑн путекӗнни пек йӑлтӑркка хура куҫӗнчен тинкерсе. — Сӗтеклӗ! Ме, сана та тасатса парам.

— Кӳпӗниччен ҫинӗ, — пӗр тутӑсӑр каласа хурать Алюш. — Паян эпӗ хамӑр кас ачисене хӑнана илсе каясшӑн-ха. Вирӗм чупма. Тутлӑ ҫиетпӗр. Пыратӑн-и?

— Хӑш яла? — инҫете кайса ҫӳрессисемех пулмӗҫ тесе ячӗшӗн кӑна ыйтатӑп эпӗ.

— Аякка мар, Аялти каса анчах. Унта хуларан пуян ҫемье куҫса килнӗ. Учитель ҫемйи. Хамӑр ялсемех тет.

Эпир вирӗм чупакансем-ха тесен килнӗ хӑнана ӑкӑрпа акӑр памасӑр кӑларса ямӗҫ — Ахтар Арӑм Карчӑк вӗрентрӗ мана... — Алюш пӑтӑр-патӑр мӗн калаҫнине ҫурри не ӑнланатӑп, ҫуррине хам шухӑшласа кӑларатӑп.

Сукмакпа пӗр эшкер ача чавтарса килни курӑнса кайрӗ. Чи малта — Алюшӑн пилӗк пӗртӑван шӑллӗ-йăмăкӗ.

— Кайрӑмӑр, — алне сулчӗ Алюш.

Аванах-ши капла нихҫан тутанса курман темле ӑкӑрпа акӑршӑн вирӗм чупса ҫӳрени? Мӗн тусан лайӑхраххине пуҫ йӗри-тавра шухӑшласа ӗлкӗриччен иккӗленчӗк кӑмӑлпах ушкӑн ҫумне ҫӑвӑр хурт ҫумне сырӑннӑн ҫыпҫӑнтӑм, мӗн пулать те мӗн килет. Учитель кил-йышне те курас килет. Мӗнле хӑйса кӗмелле-ши вӗсем патне? Мӗнлерех ҫынсем-ши хӑйсем? Пуринчен те ытларах Алюш калакан ӑкӑрпа акӑр мӗнне чӑтма ҫук пӗлес килни пӗтерет! Астивессиех пулмасан та вирӗмре те пулин ӗмӗрте пӗрре хам куҫпа курасчӗ хӑть!

Пыратпӑр чӑнкӑ ҫыран хӗррипе тӗпӗр-тӗпӗр тусан кӑларса. Халь пире тем парсан та каялла ҫавӑраймӑн. Ак сӗвек вырӑна ҫитсе аяла антӑмӑр. Каҫма хӑми ҫине пусса чӑрманатпӑр-и — лач-лач-лач каҫнӑ кайнӑ пакӑлчак таран шыва сирпӗтсе! Кӑвак-кӑвак! кӑшкӑрашаҫҫӗ шапасем. Те тӳпе тӗсӗ пирки тавлашаҫҫӗ? Те ҫырма шывӗ ҫак чарусӑрсем пӑтратсан та кӑвак тесе такама ӗнентересшӗн?.. «Кӑвак, кӑвак!» — тесе хӑвартӑм эпӗ те ҫаксем лӑпланччӑр тесе.

Сарӑ сӑрӑпа сӑрланӑ тӑпӑл-тӑпӑл шӑнкӑрч вӗлли пек ҫурт умне ҫитсе чарӑнтӑмӑр.

— Калаҫаканни эпӗ пулатӑп, — татӑклӑн декларе Алюш. — Эсир шыв сыпнӑ пек тӑрӑр. Кӗтӗмӗр!

Хапха алӑкӗ ярӑнса кӑна уҫӑлчӗ те, ман тантӑшсем черетленсе картишне кӗрсе кайрӗҫ.

Тем пулчӗ: ик урапа ҫат тикӗт ҫине пуснӑ пек тапранайми тӑратӑп. Аван марах ют ҫурта ҫапла ыйткалакан хурӑм пырса кӗме. Килтисем пӗлсен мӗн калӗҫ? Чикан урапи ҫинчен ӳксе юлнисене тем те юрать пуль те — мана килӗшмест.



— Эс мĕн мăраланса юлтăн? — чашкăрать Алюш. — Пĕрре уçнă алăкран пурте пĕрле кĕрсе пĕтетпĕр.

— Кĕместĕп эп... Кĕтмен хăнан мĕн илемĕ... Вăтанап...

— Вăт кутăн! Хырăм выçни намăс мар вăл... Ĕçсĕр ларакан патша та выçать тет... Сана кам паллать унта?

Каларĕ те! Кам паллать... Урăх никам пĕлмесен те, хама хам паллатăп... Вăл ман вырăна та хăй калаçасшăн-çке-ха тата!

Юрĕ. Алăк урати урлă кĕпĕрленсе каçрăмăр та пÿрте кĕрсе тăтăмăр. Пушмаксем тĕпĕртетсе пĕтерсен шăп пулса тăчĕ пĕр хушă. Пÿртре тутлă шăршă кĕрет. Те пыл шăрши вăл, те чечек. Тăрăл-л! тăрăл-л! тăрăлтатать темĕн.

— Сă-сăрасвуйччĕ! — терĕ Алюш чат вырăс пек. Пит тăрăшса каланипе халтан кайса çаннипе çамки çинчи тарне шăлса илчĕ.

— Килĕрех, тĕпелелле иртĕр, — тĕлĕнĕвне ăшă кулăпа пытарса тарават кĕтсе илчĕ пире кĕске çÿçлĕ кăтра майра. Ни тутăрĕ çук хăйĕн, ни çивĕчĕ. — Кам кирлĕччĕ сире?

— Ну, шăрăх тăк шăрăх паян урамра! — майра сăмахне ним вырăнне хумасть Алюш.

Пире çăвара шыв сыпнă пек тăма хушнă та, эпир, çур пÿрт кĕрсе тулнă вĕтĕр-шакăр, шăл шурри те кăтартмастпăр. Пурте аптранипе Алюш хыççăн çаннисемпе çамка тарне шăлса тăраççĕ.

Малти пÿртрен вăтам пÿллĕ куçлăхлă арçын тухрĕ. Çакă ĕнтĕ вăл — хуларан килнĕ Учитель! Эпĕ сывлама та манса кайрăм. Вăл мана тĕнчере çуккине те пĕлессĕн туйăнать! Пăх-ха эс, сăн-пичĕ кăна мар, мĕнпур кÿлепи темле... çутă хĕлхем сапать! Эпĕ ăна пĕр пĕчĕк ыйтупа чăрмантарма та асăрханнă пулăттăм — хуравлама пуçлĕ те, каç пулсан та тухса каяймасăр хăшкăлас-и? Анне килĕрен киле çÿресе çĕрĕпе шырĕ хăйĕн «патак ачине».

— Мĕн ĕçпеччĕ, ачсем?

Учителĕн кăна çакăн пек тÿлек те тарăн сас пулма пултарать пуль...

— Мĕн... Эпир... Пă-пă-пире... Вă-вă-вирĕм... Ну...

Тем пулчĕ Алюша тĕк тăмалăх: чĕлхи чăлхансах пĕтрĕ, мăк-мак кăна тукалаять. Ахаль те селĕпскер çăварĕнче тем пăтти пĕçерет.

— Ну, шăрăх тăк шăрăх урамра! — хайне хай алла илнĕ пек пулса персе ячĕ каллех Алюш. Вĕренсе лартнă тейĕн.

— Паллашар-ха, — тет Учитель Алюш патне пырса. — Мана Алексей Александрович тесе чĕнеççĕ. Эсĕ кам ачи пулатăн-ха?

— Ман атте черкке тĕпне путса вилнĕ, — лаплаттарса хучĕ пирĕн утаман хăюланса çитсе. — Анне каларĕ... Вăл шăршлă шыв ĕçсе анранă та, мана пĕррехинче тĕк тăмалăх пус кутĕнчи шетнике кутăн чăмтарнă... Çавăн хыççăн ман чĕлхе тытăнчăклă пулса юлнă... Вара Турă хайне путса вилмелле тунă пулать, — такăна-такăна тертлĕн каласа пĕтернĕ хыççăн чат ват çынла хаш сывларĕ Алюш.

Йĕркипе черет ман пата та çитрĕ. Чăт та тўс! Атте-анне ятне ярса çўрени çакă пулать ĕнтĕ. Халь тин ним те улăштараймăн, хамшăн хамăнах явап тытмалла, никамăн та мар.

— Сан аçу мĕн ятлă, ачам? — акă çурăмран çупăрлать мана Учитель. Тăлпăвăм тăрăх сў! чупса каять çунатлантарса яракан вăй. Турă сĕртĕннĕ пек...

Эпĕ нимле мар пулса кайнипе ачасем пĕр-пĕрне пўлсе ман атте-анне камне ăнлантараççĕ.

— Люся, — тет Учитель, — çак ача Феликс Ивановичăн иккен!

— Çапла-и? — йăлкăшать тутăрсăр аппа. — Мамине салам кала! Паппин сывлăхĕ еплерех? Каникулта тинĕс хĕррине тухса каймарĕç-и?

— Мами-паппи çук ман... — çамка айĕн пăхса илтĕни-илтĕнми мăкăртататăп эпĕ. — Атте-анне кăна...

Мĕнле тинĕс пирки калать-ши вăл? Мĕн шыраса тухса каймалла вара унта аттепе аннен ĕç вăхăтĕнче?..

Мана никам та илтмест. «Мами», «паппи» тени чаплărах-тăр çав — учитель ачисем çапла калаççĕ. Анчах маншăн тесен тутлăн-сĕтлĕн анне, атте тенине ним те

çитмест. Такам ачипе арпаштараççĕ кусем мана. Атте те Феликс ятлă-ха, анчах асатте Иван мар-çке...

— Ну, шăрăх тăк шăрăх паян! — ăслă сăмах калатăп тет-ши, каллех çавăрттарса хурать Алюш. Такамран вĕреннĕ ĕнтĕ. Ыттисем вăл хытарса хунине астуса тутиçăварне ал тўрчĕпе хупласçĕ, ăнсăртран тем персе ярас марччĕ.

— Аре, кăнтăрла та çитрĕ, ачасен хырăмĕ хыр тăррине кайнă пуль, сĕтел хушшине лартăр-ха. Эх, çак çамрăксене, вĕрентсех тăмалла, — илтĕнсе кайрĕ тĕпелтен ватăлса кивелнĕ сасă.

Пăх та, чаршав хыçĕнче куççăр карчăк çăм арласа лара парать. Тăрăл-л! тăрăл-л! ташлать урайĕнче сар йĕке. Чăнчăн юмах!

Пукане çўçлĕ майра хыпаланса ўкрĕ.

— Чей вĕрерĕ, ачасем, çырлапа чей ĕçтерем-ха сире, иртсе ларăр сĕтел хушшине.

— Çапла, çак шăрăх кун чей ĕçмелле, ларăр, — сĕнет Алексей Александрович та.

Эпир харăс тенĕ пекех лăнкăрт! çăтрăмăр çаварта пухăнса тăнă сĕлекене. Кĕшĕл-л! иртрĕмĕр малалла.

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ... тăххăр, вуннă, вун пĕр... — шутлать майра пирĕн шакла пуççене. Кĕрен чечеклĕ чечен куркасем кăларса лартать.

Сĕтел хушшине кĕрсе пынăçем хыç пукана тивиччен пĕчĕк кашăк ярa-яра тытрăмăр. Тытăнтăмăр эрешлĕ савăтри çырлана явма! Хамăра хамăр тытса чарма майĕ пулсан юрĕччĕ-ха та — çук çав... Чейĕ пăсланса пĕтнĕ çĕре çап-çут турăмăр. Алюш юлашкинчен шĕвĕр пўрнипе пылак савăта лайăх кăна сăтăрса çавăрчĕ те пўрнине çăварне чиксе чăпăрт! ĕмсе илчĕ.

— Люся, варенине сахал ярса панă иккен эсĕ, — майри енне йăвашшăн пăхса сăмах хушать Учитель.

Ак ырлăх! Сĕтел çине тата темиçе савăт çырла тухса ларчĕ. Пылланса тăракан йăлтăр-ялтăр сийĕ сўтĕн пек чĕтренсе тăрать, ун çинче пирĕн сăн чўхенсе вылять! Е куç-пуçăмăр телейпе çиçкĕннĕрен йăлкăшать-ши вăл?..

Эх... Пĕтрĕ. Сывлăшра шăрши юлчĕ, чĕлхе çинче — тути. Хырăмра пуш-пушах... Алюшăн шăллĕсем пĕчĕк кашăкне пĕр майлă çуласа пăхрĕç, тепĕр майлă — тек тути тухманнине ăнланса сĕтел çине хучĕç...

— Чейпе сыпмаллаччĕ, — тет тарават кил хуçи.

Ак тата! Кам асилнĕ чейпе сыпмаллине? Паçăр калanине хăлхана чикнĕ пулсан та... курăк шывĕ килте те вĕретсе ĕçме пулать.

— Сăпаççипă, — терĕ Алюш пуриншĕн те. Юрать вăл таçтан вĕренсе çитнĕ чаплă сынсемпе именмесĕр калаçма.

Кăштăрт кăна тухса тăтăмăр сĕтел хушшинчен. Ĕнтĕ каясси çеç юлчĕ. Алюш çине пăхатпăр.

— Тоçвитани, — терĕ вăл пуриншĕн те.

Тĕпĕртетрĕмĕр алăк еннелле.

— Çапах та мĕн ыйтма килнĕччĕ эсир? — илтĕнех кайрĕ чаршав хыçĕнчен хайхи кивелсе çитнĕ сасă.

Пурте каялла кĕшĕл-л! çаврăнтăмăр. Карчăк чаршавне сирнĕ те шур илнĕ куçĕпе пирĕн çине витĕр курас пек шăтарасла пăхать.

Халь каламах тивет, ниçталла та пăрăнаймастăн.

— Ă...ăкăрпа а...акăр, — тет пăлханса ӳкнĕ Алюш нихçанхинчен те тытăнчăклăн.

— Мĕн-мĕн?

— Ă... ă...ăкăрпа а... а...а...

— Кунтарах ирт-ха, хăлхи хытăрах та манăн.

Алюш кинеми патне çитсе те ĕлкĕрейменччĕ, лешĕ тенкел çинчи витререн пĕр алтăр шыв ăсса илчĕ те эпир куç хупса иличчен чаш! тутарчĕ Алюш çине.

— Халь лăплан та васкамасăр, сăмаххусене юратса кала.

— Ç-ç...ăкăрпа с-с...ахăр... Ну, катса çимелли... Хура çăкăрпа çисен тĕнчере çук сĕре тутлă вăл... — чип-чипер калаçса кайрĕ Алюш.

Учительпе майри пĕр-пĕрин çине пăхса пирĕн пекех шанк хытса тăчĕç.

Эпир тăна кĕрсе каллех сĕлекене лăнкăрт! çăтрăмăр.

Ахтар Арăм Карчăк кил-хуçалăхне пур енчен те асар-писер ашкăрса ÿсекен курăк пусса илнĕ. Хапха алăкĕ умне илсе çитерекен сукмак таврашĕ те палăрмасть, кĕрсе-тухса çӳрекен çук тейĕн. Мана унăн çурчĕ темле... пĕр вăхăтрах пур та, çук та пек туйăнать. Тата тĕрĕсрех каласан, юри кăна куçа курăнса ларать пек. Хуçи вара эпир пĕлмен урăх вăхăтра пурăнать пек.

Пек-и, пек мар-и — çак самантра эпир Ленукпа иксĕмĕр Ахтар Арăм Карчăк пӳрчĕ умĕнче тăратпăр. Ват çыннăн хуçалăхĕнче ик алла пĕр ĕç тупăнмĕ-и — эпĕ унта-кунта шаккакаламаллипе аппаланăп, Ленук та кĕрĕк арки йăваласа лармĕ. Сашука та чĕнтĕм те, илĕртсе килесси пулмарĕ: «Вирĕм мĕнне ахаль те чухлап, вир пăтти юратнă пулсан пĕр турткалашмасăр пырăттăмччĕ», — терĕ анчах...

Хӳме урлă кармашса пăхакан лапсăркка çум курăк темшĕн çан-çурăма сӳлеттерет. Тĕсне çухатса çĕрĕшме пуç-ланă, тĕллĕн-тĕллĕн симĕс мăкпа хĕрлĕ хурт-кăпшанкă сырса илнĕ карта хăмине тĕкĕнсенех тӳрлетейми улшă-ну пулса иртесле шиклентерет. Ăçтан кăна килме шутла-рăмăр пуль таврана сехĕрлентерсе тăракан вырăна! Пĕлес килни пĕтерет! Ĕнтĕ тинех каялла чакмалли çук. Кăмăла хытармалла та хапха алăкне уçса картишне ярса пус-малла. Ытти хăйне хăех пулать вара.

— Эп... ман киле каяс килет, — пăшăлтататать Ленук ăш-чике пушшех шуйхантарса. — Чĕре ура тупанне çитрĕ...

Ман мĕн тăвасси юлать ĕнтĕ? «Хамăн та хăранипе пуç тӳпинчен сĕрĕм йăсăрланать», — тес-и? Ĕмĕрте пĕрре кăна тухса кайтăр çăвартан çапла мĕскĕн сăмах — арçын пул-са ÿсесси яланлăхах пĕтрĕ тесе шутла вара. Атте те ун пек çемçешкеленнине ĕмĕрне илтмен, асаттепе кукаçи пир-ки каламалли те çук. Манăн мĕн, йăх ятне яракан лан-чашка пулас-им?

— Ленук, — терĕм сасса çирĕплетме тăрăшса, — эпир



кунта ырӑ шухӑшпа килнӗ. Юмахра та ырӑ ҫынна Турӑ пулӑшать.

— Вирӗм мӗнне асанн̆у те калаcа параятчӗ пуль... — хӑйӗннех перет ман тантӑш.

— Ахтар Арӑм Карчӑк, хӑть те мӗн кала та мана, темӗн ыттисем пӗлменнине пӗлет. Унӑн амӑшӗ хӑватлӑ сӑмахсем каласа аслатиллӗ тӑвӑл кӑларма пултарнӑ теҫҫӗ... — ҫак киле кӗрсе курмасан чун лӑпланмассине тата ытларах сиссе илетӗп хам.

— Темӗн ҫав... Вулама-ҫырма та пӗлмест тет вӑл...

— Ҫӗр ҫинче мӗн чухлӗ вулама-ҫырма пӗлекен ҫын, хӑйсем пурте ыттисем пӗлнине кӑна пӗлеҫҫӗ... Кайрӑмӑр!

Хамӑн сассӑм хама хӑвапа сӳсе илнӗн шарт сиктерчӗ. Такам хыҫран тӗртнӗ пекех пулчӗ ку. Чӗр-р-рик! ҫухӑрса ячӗ кивӗ хапха тӑпси урмӑш сасӑпа — килте кӑкаркӑҫра тӗлӗркелесе выртакан Ӑҫтиҫук хӑрах куҫне уҫса пӑхрӗ пуль! Юрать ҫӗрле мар — чӗре шар-р ҫурӑлса кайӗ ҫавӑнта. Ха, пушар чанӗ вырӑнне те усӑ курма пулать ку алӑка!

Кил картине кӗрсе тӑтӑмӑр — ӗмӗт патне ҫывхарни туйӑнмарӗ-ха. Ҫынсенни евӗр нимле чӳрече те курӑнмарӗ, куҫ тулли тӗнӗсӗр-хушӑксӑр хӳме ҫеҫ. Тӗнкӗлтетрӗмӗр алӑк шыраса малалла. Пуҫ ҫаврӑнса кайиччен ҫаврӑнтӑмӑр — ҫук! Ҫатан карта патне килсе тухрӑмӑр. Унӑн шалалла та, тулалла та уҫӑлакан алӑкӗ ниҫталла мар таҫталла илсе каять. Пӑх та — карта леш енче шерте вӗҫне ҫакса янӑ темле аҫтаха пусӗ шӑл йӗрсе тӑра парать! Лӗхлетсе кулнин ахрӑмӗ хӑлхана хупласа хучӗ. Те туйӑнать?

— Ленук! — тусӑма ыталаса чӑмӑртарӑм хам ҫума. Сехре хӑпса тухнипе мар, хӗрача ҫакна ан куртӑр тесе.

— Мӗн унта? — хӗвӗмре Ленукӑн чӗри тыткӑна ҫакланнӑ ҫерҫи пек тапӑлтатнине туйса тӑратӑп.

— Кайран каласа парӑп...

Куҫӑм хӑмла шалчи тӑрӑх ҫӳлелле хӑпарса пынӑ май тӳпе тулли каркаланса тӑракан Юмахҫӑ Шурсухала курах кайрӑм. Тӗпсӗр куҫӗпе пӑралан̆ӑ пек шӑтарасла пӑхать ҫӳлтен аялалла. Пӗтрӗ пуҫ! Мӗнле асамлӑ ҫаврана

лекрӗмӗр эпир? Кунти сывлӑш Пӑлари авӑр евӗр мар пуль те? Армак-чармак йывӑҫ кӳлепесем тахҫанхи авалхи чӗлхепе каласса кайманни анчах! Кун пекки Лешкасра ҫеҫ пулма пултарать. Турра шӗкӗр, пусӑм хӑй вырӑнӗнчех иккен, карттус кӑна хывӑнса ӳкнӗ.

— Аллӑн пурӑнаҫҫӗ, кӗме-тухма алӑк ҫук. Ҫавӑ мӗн пулать?

Ленук мана илтмест. Илтменни чухах та — чарӑлса кайнӑ куҫӗсенчен ахаль те вут хыпса илес пек.

— Авӑ хӑлӑп!

Пырса туртрӑм алӑк хӑлӑпӗнчен. Шалтан сӑлӑп янӑ пулас — уҫӑлмасть. Ахтар Арӑм Карчӑк вӑрӑ тавраш кӗресрен хӑрать тес — лешсем хӑйсем хӑраса тухса тарӗҫ кунтан! Тӑпси тӑпӑлса ан тухтӑрах. Ҫавӑнпа алӑка Ӑстиҫук хӑлхине лӑсканӑ хурӑм ҫеҫ силлекелерӗм. Шӑпшӑпарт. Шӑплӑха эп нихҫан та илтменччӗ. Тамаша! Сассӑрлӑха та итлеме пулать иккен.

Унччен те пулмарӗ:

— Кам унта? Чӗннӗ хӑнамӑр ҫукчӗ те, Пӳлӗх кӗтмен хӑна ярса парса чыс турӗ-ши? — йӑнкӑр-йӑнкӑр юрласа ячӗ таҫта такам.

Пирӗн ума кӑштӑрт кӑна йӑрӑ карчӑк тухса тӑчӗ.

— Килӗрех, тӗпелелле иртӗр! — чарӑнми юрлать кил хуҫи. — Мӗн ҫӑмӑлпа ҫӳрет вӗт ура касси?

— Ҫӑмӑлӗ-мӗнӗ... — тӑрук хӑй йӗри-тавра килсе сырӑннӑ пӗр кӗтӳ ула-чӑла ҫӑмхана куклене ачашлама пикенчӗ Ленук. — Мӗн чухлӗ кушак ҫури сирӗн!

— И-и, мӑннисем тата ытларах, — сассине пылаккӑн кӗвӗлесе тӗпел чаршавне сирчӗ Ахтар Арӑм Карчӑк. — Ҫаксемпе йӑпанкаласа пурӑнатпӑр ҫапла. Тахҫанах, сакӑр вуннӑ урлӑ каҫсан-и, ӗне тавраш тытма пӑрахрӑм та, кирлех вӗт кил-тӗрӗшре куҫран пӑхакан мӗнле те пулин янавар.

Тӗпелте ула-чӑла ҫӑмламас кавир сарса-витсе тухнӑран куҫ-пуҫ алчӑраса кайрӗ: вӑрӑм сак ҫинче, сӗтел ҫинче, сентре ҫинче, урайӗнче — ниҫта ура ярса пусма ҫук кушак иккен, сарма мар!



4-50488
Национальная библиотека
Чувашской Республики

— Кам ачипчи пултăр-ха эсир, никам патне кайса хураймарăм, — пире тенкел лартса панă май шав калаçать кинеми. — Аçăр-аннĕр ĕçпе ячĕ-и?

— Манăн кукаçипе кукамисирĕн кассем, Мăрсаккай Алмантайăн мăнукĕ пулатăп эпĕ.

— Çӳлтикассем-ха эпир. Хамăр ĕçпе çӳретпĕр, — пире çитĕннĕ çынпа тан хурса калаçнăран чĕлхи салтăнсах кайрĕ Ленукăн та. — Сана кăштах пулăшма пулмĕ-и тесе килтĕмĕр те, Ахтар Арăм Кар...

Ленук ман çине айăпа кĕнĕ пек пăхса илчĕ те тутине ывăçĕпе хупласа пĕр утăм каялла чакса тăчĕ.

— Ахтар Арăм Карчăк! — тетĕп эпĕ халь тин сăмаха ун пек-кун пек кукăртса тăни килĕшӳсĕррине ăнланса: кинемин урăх ят пуррипе çуккине ялта никам та пĕлмест. Тен, хăй те астумасть пуль хăйĕн чăн ятне. — Пире Алюш тĕллесе ячĕ сан патна. Леш, чикан урапи çинчен ӳксе юлнисенчен пĕри, илтнĕ пуль... Тем те пĕлет вăл. «Ахтар Арăм Карчăкран лайăхрах вирĕм уявĕ çинчен никам та каласа параймасть сире», — терĕ. Чăрмантарса çӳретпĕр çапла, айăп ан тăвах...

— Анне! — тăпсине çухăртса уçăлнă алăкран пуçне чиксе хыттăн чĕнчĕ кинеми. — Тух-ха, сан патна пысăк хăнасем килнĕ кунта!

Унччен те пулмарĕ, эпир ним ăнкарса иличчен, малти пӳртрен патша майри пек карчăк стайлăн юхса тухрĕ.

— Кам кансĕрлесе çӳрет? Кам вĕтĕр-шакăрĕ ку, хĕрĕм? — алăк тăпси хальхинче çын чĕлхипе калаçса кайнăнах туйăнчĕ пире.

Аптранипе шак хытса тăтăмăр.

— Пит нумай пĕлесшĕн çунакан шăпăрлансем кусем. Вирĕм çинчен каласа пама ыйтаççĕ.

— Э?.. Курман, илтмен, пĕлместĕп, — пире пачах асăрхамăш пулса сарлака çемçе пукан çине лаш кĕрсе ларчĕ хитре карчăк.

Кушаккисем ăçтан сисрĕç пуль — тахăш хушăра хупăрласа илчĕç Патша майрине, хăшĕ чĕрçи çине, хăшĕ хулпуççи çине, хăшĕ арки вĕçне майлашăнса ларчĕ.

M-5 0488

— Ачашка, эс мĕн ютшăнса кайрăн? Йăлуна мантăн-и? Лар, лар ура лаппи çине, утьăкка сиктерем. Кӳр ёнтĕ малти тяппусене. Уп-па! Уп-па! Матьтӳркка! Халь сан черет, килях...

— Кăштах урлă выртана тăрăх çавăрса хума пулăшас тенĕччĕ тата, — кушакĕсемпе айкашакан Патша майри пирĕн çинчен мансах каясран хушса хума васкарĕ Ленук.

— Э?.. Урлă выртана тăрăх çавăракансем сирĕнсĕрех ак çурт тулли. Хĕрĕм чашăк-тирĕк çуса та аппаланмасть — яп-ялтăркка туса хураççĕ, — те шахвăртать, те юптарать ватă. Хăйĕн çурăк сасси пире хăвăртрах кăларса ярасшăн евĕр хăлхана чĕрмелет.

— Эпĕ урай сĕрсе пама пултарап, тусан шăлма, — унталла-кунталла куç ывăтать Ленук.

— Урай сăтăракан та пур пирĕн, шĕкĕр Турра! Мăнук Шупашкартан халь-халь килсе çитмелле — хулара кахалланса ан пурăнччăр çамрăксем. У-тя! У-па!

— Эрнере пĕрре килсе тăрать-ха. Пуçĕпех куçас теме те пултарĕ...

— Çулĕ инçе тесе чӳречерен пăхса лармалла мар çав, пĕчĕккисене те ял сывлăшĕпе сывлаттармалла. Атту енчĕкĕм... саппун кантринчен ытла йывăррăн сулланса çӳресе яштак пĕве авать...

Пуçра кăштăртатса хĕвĕшекен шухăшăмсем хама та илтĕнеççĕ, Шупашкарти мăнукĕпе саппун кантри мĕнле майпа çыхăнна-ши ёнтĕ? Хĕрĕ те тахçанах сакăр вуннăран иртнĕ пулсан, миçере-ши вара ку Ахтар Арăм Карчăк? Хулари мăнукĕ каччă пуçĕпе хĕрарăм ёçне тиркеместши вара? Е хĕр-ши? Вăл-ку юрĕ-ха, пирĕн ыйтăва мĕншĕн тăнч илтмене перет тата?..

— Эпĕ ача чухне пурнăç урăх тĕслĕччĕ. Этеммисем те урăхла чустаранччĕ, — тикĕт сĕрмен урапа çĕнĕ талпăнупа вырăнтан тапранчĕ хайхи. — Савăнăç килсен халăхпа савăнма пĕлнĕ, инкек йăтăнса ансан — ял-йышпа кулянма... Куç та витĕрччĕ, хăлхам та çивĕччĕ. Халь чунпа курап, чунпа илтеп... Ыррине юнашар лартап, усаллине яхăна та ямастăп.

— Кирлӗ сӑмаха туххӑмрах илтекенччӗ-ха эсӗ, анне. Хӑвна юрӑхсӑррине анчах хӑлха хӗррипе иртттерекенччӗ... — ытарлӑн ҫиҫет юрласа калаҫма пӗлекен хӗрӗ.

Ҫак ватӑсене итлесе ларасси — хӑй пӗр киленӗҫ. Ӑнланса пӗтериччен тинке тухать те, пӗтӗм интересӗ ҫакӑнта пуль теп.

— Анне, ӗлӗкхи йӑласем ҫинчен каласа пар-ха эс вӗсене.

— Э?.. Калап-иҫ... Сурхуринче юмӑҫ пӑхаттӑмӑрччӗ: «Ман упӑшка мӗн ятлӑ?» — тесе ыйтаттӑмӑр килтен киле чупнӑ чухне. Мана пӗрремӗшӗнчех: «Ахтар ятлӑ!» — терӗҫ те, Ахтарах качча тухрӑм вара, шӑпаран иртес темерӗм, алли ылтӑнччӗ!.. Путек-сурӑх ӗрчевлӗ пултӑр тесе урайне ӑшаланӑ пӑрҫа шапӑр-шапӑр сапаттӑмӑрччӗ, ҫӑвартан ями йӑвача ҫиеттӗмӗрччӗ!.. Сурхуринче аннӗр йӑвача пӗҫерсе парать-и?

— Йӑвача вӗрилле пит юратап эп. Сӗтпе те, сӗтсӗр те тутлӑ. Калӑмра ҫӑмартасене сухан хуппипе хам пӗвететӗп, — манран малтан пӗлтерсе ӗлкӗресшӗн пӑтӑр-пӑтӑр каласа тӑкать Ленук.

— Э?.. Хуларисем маннӑ. Ман мӑнуксен мӑнукӗсем ыррине нимӗн те пӗлесшӗн мар, пирӗншӗн мӗн хаклӑ — вӗсемшӗн ҫӳпӗ. Чун тени пушӑ тӑмасть вӑл... Вӗсен ӑшчикне хула каяшӗпе тӑнкканӑ... Хам ҫумра пулсан-и! Калаҫтармӑттӑм-ха мӑн кукамӑшпе ют чӗлхепе. Сӑмах тени чӗрене пымалла вӑл. Пурӑнаҫҫӗ мӗнпур хамӑрӑннинчен писсе. Пирӗн йӑхра ӗмӗрне пулман ун пекки, хупа ху та хуҫа пулманни! Эх-х, шӗветрӗҫ йӑха!

Ахтар Арӑм Карчӑк чӗрҫи ҫинчи кушаккисене асӗнче мӑнукӗсен мӑнукӗсем вырӑнне хучӗ-ши, ытамласа ҫупӑрларӗ те чарӑнми ачашлама пуҫларӗ.

— Сирӗн хӑраххӑр пӗчӗк чухне Ҫӑварни чупнисем асрах-ха. Пӗррехинче ҫапла кам утне пуринчен те капӑртарах илемлетет, ытларах юрӑ пӗлет — ҫавна парне тивет терӗҫ. Урхамахлӑ яш-кӗрӗм кӗрхи ӗҫсем хыҫҫӑнах ӑшталанма пуҫланӑччӗ. Пирӗн атте тӗреклӗ пурӑнакан хресченччӗ те, кашни пичче уйрӑм ут хатӗрлеме пуҫларӗ.

Вёсене кура манăн та тем... хĕрача пуҫпа айккинче юлас килмест. Йăмăкăм чеен кулса Мăкла ҫине тĕллесе кăтартать. Парать вăл сана мăкла — ик мăйракипе яла хăратса тăрать! Мĕн тумалла? Парăнма юрамасть — эпир чаплинчен чаплă пулма хăнăхнă. Ёмпӳ юнĕ чупать пирте. Чи малтан Ҫăварни юррисене аппа ҫумне ларса лайăх кăна вĕрентĕмĕр. Кукамайăн амăшĕ тата авалтарах юрланисене вăрттăн ĕнĕрлесе пачĕ — вăхăт ҫитмесĕр хыттăн янраттарма юрамасть, аре. Катаччи чупмалли кун ҫитсен йăмăкпа иксĕмĕр качакана кӳлсе тăратрăмăр, ик мăйракине вут пек хĕрлĕ хăю, унта-кунта тĕрлĕ тĕслĕ пурҫăн ал тутри ҫыхрăмăр, мăйĕнчен кĕмĕл шăнкăрав ҫакса ятăмăр та йывăҫ ҫунашкамăр ҫине ларса яра патăмăр халăх хушшине! Иртен-ҫӳрен ҫул ик еннелле кĕшĕл-л! сирĕлсе пырать. Шăнкăравăмăр чĕнкĕл-чĕнкĕл-чĕнкĕл-л-л! туса хăлхана савăнтарать — халь те сасси янкăсах ун, манашкал ватăлман. Хамăр пуҫри ҫӳҫеллĕ тутăр хӳрисене ҫилпе вĕлкĕштерсе, ҫамрăк сассăмăрпа таврана янратса юрлатпăр:

Ҫăварни ҫуни ҫапла ай пулать-и,
Ҫăварни ҫуни ҫапла пулать-и?
Ай-йур-кинна-риккен-ай-йай-йур!
Ыр ут кӳлмесĕрех ай чупать-и,
Ыр ут кӳлмесĕрех чупать-и?..

Ахтар Арăм Карчăк ҫамрăк сассине асилсе юрларĕ пулин те, унăн карланки хĕсĕнсех ларчĕ пулас, юлашки сыпăк чĕп кăларнă амине сыхлакан хур аҫинни пек чашкăрса кăна тухрĕ. Вара вăл урăх юрлас темерĕ, хавхаланса ҫапла хушса хучĕ:

— Киле эпир ҫунашка хыҫне така кăкарса таврăнтăмăр, пирĕн качака чи пысăк парне ҫĕнсе илчĕ!

Ленукăн татах мухтанас килчĕ пулас:

— Эпир Калăм эрнинче килтен киле ҫăмарта пуҫтарма та ҫӳретпĕр. Ваттисем пит хапăлласҫĕ пире, тем те чиксе ярасҫĕ: канфет-пĕремĕк, мăйăр, пан улми...

— Ҫӳренĕ, хамăр та ҫӳренĕ. Вирĕмре ирех вăрмана кайса пилеш хуҫса килеттĕмĕр те: «Чир кайтăр, чир

кайтӑр!» — тесе, эх, вара пӗр-пӗрне, хуралтӑсене, тумтире ҫатлаттараттӑмӑр. Кӗмен кил хӑвармастӑмӑр ҫапла. Кучченеҫсӗр никам та кӑларса яман. Кайран пурте пӗрле пуҫтарӑнса кӑвайт умӗнче сайланаттӑмӑр. Вут урлӑ сикеттӗмӗр тата тасалма... Илемлӗ пурӑнма пӗлнӗ ҫав ӗлӗк! Халь мӗн... — аллине пушӑлла сулать Ахтар Арӑм Карчӑк.

— Вирӗм мӗнне илтменччӗ те, кӑҫал ҫав Алюша пула пӗлтӗм, — хушса хуратӑп эпӗ те калаҫу тинех кирлӗ йӗр ҫине ӳкнӗшӗн хӗпӗртесе.

— Ҫын пулать сиртен. Каларӗ тейӗр. Хӑвӑр та ват ҫын сӑмахӗпе калаҫма пӗлетӗр те, — мухтаса ислентерсех ярать пире Ахтар Арӑм Карчӑк.

— Пурнӑҫ вӗрентет, — тетӗп эпӗ ҫара янаха асатте пек шӑлкаласа. — Кинеми, эпир санран шӑпах...

Чӗнкӗл-чӗнкӗл-чӗнкӗл-л-л! янраса кайрӗ илемлӗ сас.

— Ак ҫитрӗ те манӑн хӗр! — хыпаланса ӳкрӗ йӑрӑ кинеми.

— Э?.. Ӗхӗ! Вӑл ҫапла виҫҫӗ янраттарать кӗмӗл шӑнкӑрава.

Пӳрте патша майри пек каҫӑрӑлса... тепӗр Ахтар Арӑм Карчӑк кӗрсе тӑчӗ. Те пушмакӗн кӗлли шаклатать, те аллинчи чипер туйи.

— Ҫӳреҫҫӗ-и? Ман килес!

— Иртех, ирт! Мӗнле килме пӗлтӗн, ылтӑнӑм?

— Телевисӑр ярап — тӗнче пӗтсе килнӗ пек туйӑнать, чӳречерен пӑхап — урамӑн ӗлӗкхи илемӗ ҫухалнӑ... Сӑмах техӗмне пӗлекен те юлмарӗ. Санпа калаҫса ларсан ҫӑвар тути килекенччӗ...

Нимӗн те ӑнланмастӑп: Ахтар Арӑм Карчӑкӑн мӑнукӗ ҫакӑ пулать-ши, урай ҫутарма кӗтекенни?! Каснӑ лартнӑ кукамӑшӗ вара... Куҫ умӗнчи виҫӗ карчӑк пӑтрашӑнса кайрӗҫ те, уйӑрайми пулса лартӑм, тахӑшӗ амӑшӗ, тахӑшӗ хӗрӗ, тахӑшӗ мӑнукӗ...

— Каяр пуль, Ваҫкӑ, — чӗпӗтет мана Ленук алчӑранӑ куҫӗпе ун-кун пӑхкаласа.

— Айӑп туса ан юлӑр, — ура ҫине ҫӗклентӗм эпӗ.

— Аннен йӗкӗреш хӑраххи-ха ку, — пӑшӑлтатса пӗлтерет пире Ахтар Арӑм Карчӑкӑн хӗрӗ. — Темиҫе минут каярах ҫуралнӑ та, йӑмӑк тесе чӗнет ӑна анне. Аппа, атя, тӗпелерех иртсе лар-ха, килти пек пул...

Патша майри евӗр стайлӑ Ахтар Арӑм Карчӑк пире хапха алӑкӗ патне ҫитичченех хӑй ӑсатса ячӗ.

— Мана, ватта, хисеп туса килнӗшӗн ӗмӗр пархатар курмалла пултӑр сирӗн, ачамсем. Пирӗн тӗле кӑтартса яракана сӑвап пултӑр. Манса ан кайӑр, килсе ҫӳрӗр, — кӗсьесене кучченеҫ тултарнӑ май хӑралти сассине пыл сӗрнӗ пек ӑшшӑн калаҫрӗ вӑл.

Унтан шерте вӗҫне тӑрӑнтарнӑ элес-мелес кӳлепесем енне кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ те такам илтесрен хӑранӑн шӑппӑн кӑна хушса хучӗ:

— Вилӗм ҫинчен кӑна урӑх ан ыйтӑр манран, курман, илтмен, пӗлместӗп, пӗлес те килмест!..

— Вирӗм, ви-рӗм терӗмӗр эпир!

— Аре, вилӗм теп ҫав. Пурнӑҫра ҫук вӑл. Ӑҫта-тӑр пур-тӑр та, пурнӑҫра ҫук...



Мăнкуна чуччу илем кӳрет. Чи çӳле вĕçтерекен чăнчăн чуччусем Мăнкунра кăна пулаççĕ. Çавăнпа уяв çывхарса килни ăш-чикĕме чылай малтан ачашшăн вĕркеттерсе тăрать.

Çитрĕ кĕтни! Анне мана ирех вăратрĕ, яланхилле кукаçипе куками патне кӳршĕ яла хăнана каймалла терĕ. Лайăх. Халь тин килтен киле çӳресе пĕветнĕ çăмарта пуçтаракан пĕчĕк чупкăн мар пулин те, çак кун ачапчах пулса юлас килет. Темĕн хальччен курманнине курса тĕлĕнес кăмăл пур.

Мăнкун ячĕпе килтисем мана пĕрмечеллĕ юбкăпа шăккăлт-шăккăлт пушмак тăхăнтартрĕç. Сăмахĕ çапла, Мăнкунра çи-пуç таврашне «парнелеççĕ» темеççĕ, тăхăнтартаççĕ. Вара ку чи хаклă парне шутланать.

— Шăрçа! Чат ахах, çĕрĕ куçĕ! Пĕве кĕнĕ хĕр сăнĕ çапрĕ капла, кай-кай-кай! — пăхса ытараймасть мана асанне. — Эх, çĕлеме пĕлеççĕ-çке хальхи ăстасем! — аркă чĕнтĕрĕсене асăрхануллăн сĕртĕне-сĕртĕне ачашлать.

Урампа хам та хам мар утса пыратăп. Çурхи варкăш аркăна чӳхентерет, чун-чĕрене çӳçентерет. Шăлаварпа çӳресе хăнăхса кайнă арçын ачалла ярса пусма. Юбка урăхла уттарать иккен, йăлт улăштарса ярать! Кил-çурт таврашĕнче вĕрем пекки туса çӳрекен йытăсем вĕрме манчĕç — хăлхине тăратса хытса тăраççĕ. Хăйăр çинче вылякан шăкăр-макăр пӳрнине çăварне чикнĕ — мана куç вĕçертми сăнаса ăсатать. Эпĕ, чăпар юбкăпа йăлтăр-ялтăр пушмак тăхăннă вĕр çĕнĕ хĕрача, урампа хĕрлĕ палас тăрăх Оскар илме тухакан киноçăлтăр евĕр çиççе пыратăп.

Кукаçисен кассинелле пăраннă çĕрте — кам тетĕр — пĕлтĕр мана йĕлпĕркке тесе, виçĕм çул шĕвĕркке тесе тăрăхланă пуçтах ача (Колинкка ятлăччĕ-ши?) тăра парать. Эпĕ ăна çурăмĕнченех палларăм, анчах вăл мана çурăмĕпе курминччĕ! Икĕ çул кĕçĕнрех ачапча тесе асăрхамăш пулинччĕ те эпĕ иртсе кайиччен çаврăнмасăр тăтăринччĕ çапла... Асту сана! Куçĕпе мĕнле тирĕнчĕ —



пĕр именмесĕр чăрлаттарса пăхать. Урасене тăллантарса пăхать. Такăнса кăна ӳкес марччĕ.

— Хĕрачи, сан юбкунтан çеçке тăкăнса пырать...

Пĕрре юбка çине, тепре çул çине çаврăнса пăхатăп — паллах, ниçта та чечек вĕçни курăнмасть. Сиссе те юлаймарăм, пушмак кĕлли чалăшнипе сулăнтăм кайрăм. Каллех çак шăл йĕрен кулли пултăм иккен!

Ман çума тахăш самантра çитсе пĕшкĕннĕ Колинкка хутаçран тухса ӳкнĕ тĕркесене пуçтарма пулăшать.

— Суять тесе ан шутла... Манăн куç çапла курать. Ыттисем курманнине... Чуччупа ярăнма тухатăн-и? Улма пахчи хыçĕнчи хурăнлăхра чаплă чуччу туса çакрăм.

Ыттисем курманнине куракан Колинкка манăн чи хитре ĕмĕте те тӳрех пĕлчĕ...

Чуччу мар ку — юмахри тĕлĕнтермĕш! Кашти çӳллĕ, сакки сарлака, хыçлă, тайăнкăçĕ эрешлĕ. Пĕр çич-сакăр шуйханчăк шăпăрлан пăралук çинчи çерçи пек шăкăрин ларнă та, икĕ аслăраххи вĕсене икĕ енчен сулласа сиктерет. Колинккана курсан куç хупса иличчен пĕри те юлмарĕ — сапнă пăрçа пек таçта кайса çухалчĕç.

— Лар, ярăнтарам, — тет Колинкка чуччу патне пырса тăрса.

— Ыттисем пуçтарăнччăр-ха, тантăшсемпе ярăнăпăр.

— Никам та килмест. Манăн сана ярăнтарас килет. Кайăк пек вĕçтерес килет çӳле-çӳле!.. Вĕçсе курнă-и эс?

— Нихăçан та...

— Эпĕ курнă. Тĕлĕкре. Çавăнпа сана та вĕçтерсе кăтартас килет. Ун йышши туйăм урăх çук пурнăçра.

— Сехĕрленеп эп вăл туйăмран...

— Эпĕ çумăнтах, ан хăра, — лăпкăн хуравлать вăл.

Колинкка мана кассăн-кассăн куç тымарĕнченех пăхнăн туйăнать. Улшăннă вăл. Пĕлтĕрхи пуçтахран хăюллă арçын ачана çаврăннă. Анчах эпĕ чуччупа çӳле-çӳле вĕçессинчен те мар, темрен урăххинчен... унран хăйĕнчен ытларах шикленетĕп. Чĕре тем сиссе кăлт-кăлт сикет.

Хăравçă!.. Мулкач чĕри!..

— Эпĕ санпа юнашарах...

Чуччу — Мăнкун илемĕ. Лартăм ун сакки çине. Тайăнтăм эрешлĕ хыçĕ çумне. Пĕрре сулса ячĕ чуччăва Колинкка, иккĕ, виççĕ... Ух!.. Вĕçетĕп! Ăшра тем сÿ! сÿ! сÿлетет — шалта кайăк çемçе тĕкĕсемпе çатăлтатнăн... Чуччу вĕçет те вĕçет, эпĕ те хурăн тăррине çитиех ывтăнатăп, эпир чуччупа иксĕмĕр пĕрлешсе кайса темле вĕçен кайăка тухатпăр, çÿç-пуç вирелле тăрать, хăрушă... Манăн хăйпе хăй хуçа мар кĕлетке çурхи чĕрĕ сывлăша ваш та ваш çурать. Тепрер сулăмран чуччу виçерен тухса кăлтăрмача çаврăнассăн та мана уçлăхпа пĕрлештерсе ярассăн туйăнать... Ĕнтĕ куç умĕнче шуррăн-хуран мĕлтлетекен хурăнсем кăвак тÿпепе хутăшса тĕс кăна пулса юлаççĕ... Сехре хăпнипе шари! çухăрассăм килет — шăла çыртатăп, карлăкран çатăрласа тытнă пÿрнесем халь-халь вĕçерĕнсе каяс пек — мĕнпур чăтăмлăха пухса тÿсетĕп. Тепĕр сулăм, тата тепре — персе анатăп капла!.. Колинкка ним те чĕнмест. Тата хытăрах тĕкет. Тен, çук та вăл унта, пăрахса кайнă тахçанах?.. Тен, ку чуччăвĕ çапларахскер — чарăнма пĕлмен чуччу?.. Мĕншĕн килтĕм пĕреххут ку пуçтахăн сăмахне итлесе...

— А-а-а!.. — темле авăртан ахрăмланса тухса хăлхана пырса кĕрет хамăн сассăм. — А-а-ах!.. Чарăна-а-ах!..

...Те тăна çухатса çĕнĕрен тăна кĕнĕ, те хăрушă тĕлĕкрен вăранса кайнă — ларатăп, те çĕрте, те пĕлĕтсем çинче... Такамăн алли арпашнă çÿç пайăркисене шăлашăла якатать.

— Туйрăн-и эсĕ ăна? — эпĕ илтмелле çеç ыйтать Колинкка сасси.

— Мĕне?.. — хамăн ăна курассăм та килмест пулин те ыйтатăп шăппăн.

— Ывăла?

— Мĕнле... ывăла?

— Иксĕмĕрĕн темиçе çултан çуралас ывăла! Вĕçнĕ чухне туйрăн-и ăна ăшунта? — эпĕ «çук» теесрен хăранăн хăп-хăмăр куçне чарса пăхать ман çине Колинкка. — Çак чуччăва эпĕ çавăншăн турăм. Эсĕ ывăла халех туйса ил те упра тесе...

# Уяв парни

Пуш уйăхĕн саккăрмĕшне çиччĕмĕш «а» класри ачасем кăçал уйрăм кăмăлпа кĕтрĕç. Тăхтавсенче кăна мар, урокра та вăрттăн пăшăлтату сĕрлесе тăрать тейĕн, никам та никама та хăлхаран нимĕн те пăшăлтатмасть — çавă, хăйсене кăна туйăнаканни, сывлăшра пĕрех сисĕнисисĕнми вăй вылять, куçра çиçĕм хĕлхемĕсем чĕлтĕртете-чĕлтĕртетете каяççĕ, чĕрере ăнланмалла мар хумсем чӳхенеççĕ. Кун пекки класра нихçан пулман.

Ытти çулхисенчен ытларах пăлханма кĕтмен-туман çĕртен сăлтавĕ сиксе тухрĕ çав. Нарăсăн çирĕм виççĕмĕшне пурте пĕрле паллă тăвас умĕн пуçланчĕ çакă. Уяв çывхарнă тапхăрта канаш тума пуçтарăннă хĕрачасем чылайччен пĕр шухăш патне килсе тухаймасăр шавларĕç. Арçын ачасене яланхилле (ачапчалла!) пурне те пĕр пек парне хатĕрлесе парасси, тĕрĕссипе, йăлăхтарнă. Вара хальхинче кам кама кăмăллать — çавна хăйне килĕшнĕ пек парне патăр тесе йышăнчĕç.

Хĕрачасен кĕтмен чăрсăр пуçарăвĕ Мария Николаевнăна, шкулта виçĕ çул каялла ĕçлеме пуçланă çамрăк вĕрентекене, килĕшме мар, аптăратсах пăрахрĕ. Мĕнлеха капла?.. Темрен тем сиксе тухмĕ-и, тĕк тăмалăх пĕрпĕрне кӳренсе пурăнмалли йӳтĕм тупăнмĕ-и? Пĕр енчен, ку — ăшри пытарăнчăк туйăмсене хăвăн ирĕкӳпе çын çине кăларма тивниех-çке... Çак улшăнчăк ӳсĕмре ачаш чун суранланма пултарасси инçе-им кун пек чухне? Иккĕмĕшĕнчен, хăшĕ-пĕрисем парнесĕр юлмĕç-ши?.. Класри арçын ачасемпе хĕрачасен йышĕ пĕр танни аван-ха та... Хĕрача саламласа туйăмне палăртнă хыççăн арçын ачи кайран урăххине парне парас тесен?.. Укçа-тенки енчен те пур çемье те пĕрешкел мар тата... Класс ертӳçи пӳлĕмрен кĕлĕллĕ пушмакĕпе хыттăн шаклаттарса тухса кайрĕ: «Пĕчĕк ачасем мар, тăвăрах хăвăр пĕлнĕ пек, халь тин сире ӳкĕте кĕртейĕн-и?..»

Арçын ачасене саламласси, телее, — пĕр шутламан çĕртен! — чип-чипер иртсе кайрĕ. Юрларĕç, ташларĕç,



вылярĕç те. Малтанах пĕтĕм йышпа сăмах татнăн, йăлтах кирлĕ пек йĕркеленсе пычĕ, пурте кăмăллă. Никам та парнесĕр юлман. Мария Николаевна та лăпланчĕ.

Хĕрачасен уявĕ çывхарнă чухне канăçсăр вĕркев çĕнĕрен йăл илчĕ. Кам кама саламлĕ?.. Çук, кун пирки пĕри те уççăн калаçмасть — сӳтсе явни илтĕнмест, анчах пурте пĕлсе тăраççĕ: вăрттăн калаçу çавăн çинчен çеç.

Ленăн чĕрине паян çунакан вутпуççи пăрахнă тейĕн. Иртенпех тем йăшкать шалта. Нихçан пулманнине, пĕрремĕш урока кая юлса çитрĕ. Сăлтавĕ пулчĕ çав...

— Эпĕ сана паян килмест тесе, пит кулянтăм, — мăкăртатрĕ юнашар ларакан Катя.

— Тӳме татăлса ӳкнипе каялла таврăнмалла пулчĕ те...

Катя хăйне Ленăсăр самант та пурăнайман пек тыткалать. Унăн çумĕнче мĕн пурри те — йăлтах тантăшĕнни пек: çи-пуçĕ, çӳç çыххи, тетрадь хуплашки... Кăçал тата пичĕ çине хăмăр кăранташпа Ленăнни евĕр турпалли пăнчăлатса хума пуçларĕ.

Хĕрача кăштахран тӳсеймерĕ, йĕкĕрленĕ ывăçне асăрханса кăшт уçрĕ те:

— Пăх-ха, мĕнле парне пачĕç мана паян. Пĕлетĕн-и кам? — хуравне йăлтăр çиçсе хăех каларĕ. — Васильев!

Лена йăлтăркка сулă шăрçине вĕлт анчах курса ĕлкĕрчĕ, вĕрентекен çывăхах килсе тăни кансĕрлерĕ...

Унтан йĕркеллĕ хатĕрленсе килнĕ çĕртен биологипе «виççĕ» илчĕ. Пиллĕкмĕш урокра тĕрĕслев ĕçне вĕçлеймесĕр тертленсе пĕтрĕ... Çав хушăра Лĕня ун енне пĕрре куç ывăтинччĕ! Пĕрре кăна куç хӳрипе пăхса илинччĕ... Иккĕмĕш урок хыççăн коридор пăрăнчăкĕнче ăнсăртран пырса çапăнас пек хирĕç иртмелле пулчĕ пулин те, арçын ача пуçне пĕксе анчах иртсе кайрĕ. Асăрхаман евĕр.

...Çапла çав, сăлтав пулчĕ ирхине каялла киле таврăнма: кăкăр умĕнчи тӳме татăлса ӳкрĕ. Лена хыпаланса картишне ярса пусрĕ çеç, пахча енче хĕремесленсе калаçни илтĕнчĕ. Кам çапла хĕрӳн сăмахлать амăшĕпе?

— Эпир сирĕнпе ĕмĕртен пĕр кĕрекере ларас йăхсем мар. Ваттисем хушман, астăвăр çакна!

Вěри сăмах-юмаха тăнласа тăма вăхăт пулмарě, Лена васкаса пÿрте кěрсе кайрě.

Килтен тухса чупнă самантра тепěр сăмах хăлхана кěрсе юлчě:

— Халех пистермелле пěр-пěринчен, виссе те ан юлчăр, шала кайма пултарать! Паян пирěншěн ачапча вěсем, ыран, пăхăсăн, хěрпе каччă пулса тăрěç!

Кам сасси пулчě-ха вăл? Чим, Лěньăн амăшěн мар-и?..

Улттăмěш урок тухнă çěре мěнпур хěрача парнеллě пулнă-мěн. Пурте, Ленăсăр пуçне. Кама кěнеке çырса панă, кама флешкă, тата теприне тута писевě...

— Пěр Осипова анчах парнесěр юлнă, апла кама-тăр иккě лекнě пуль? — хихиклетсе ячě яланах мěнпур хыпара пуринчен малтан пěлсе ěлкěрекен Дина.

Лена та илтрě çакна. Кăмăлě хуçăлчě унăн. Вăл хăйне тěнчери чи сăнсăр, айванкка, никама юрăхсăр хěрача пек туйса илчě. Пěлет-ха хăй аплах килпетсěр маррине, анчах пăшăрханакан чěри темле çемçе шухăшпа çавăрсан та ўкěте кěресшěн пулмарě. Хăшě те пулсан тем пырса ыйтиччен пуринчен малтан тумланасчě те куç курми тухса чупасчě...

Коридор тулли хаваслă ачапча кумать. Концерт залěнчен савăк кěвě илтěнет. Кěçěннисен ашшě-амăшě чечек çыххисемпе классене васкать. Лена çеç пуçě çаврăннине, куçě хуралса килнине пăхмасăр никама курмасăр-илтмесěр алăк еннелле талкăшрě.

— Лена! Лена теп! Эс киле каясшăн мар пуль те? Уява юлмастăн-им? — хыçран чупать Катя. — Сан Васильеву мěнле вара?..

— Хăш... Васильев?

— Ну, иккěшěнчен пěри ěнтě, виççěмěш çук пирěн, — йăлкăшать Катя. — Хăвах пěлен!

Каллě-маллě кумакан хум айне пулнăн, Лена хěвěшÿре ыттисемпе хутăшса кайма ěлкěрчě.

Хěрачан чунě кўтсех килчě. Йěрсе кăна ярас марччě. Кăмăлне тăрăшсах хытарчě пулин те, йăр-яр юхса анчě пичě тăрăх темиçе вěри тумлам. Унччен те пулмарě,

хыҫрах питӗ ҫывӑх сас, чӗрене урӑхла таптаракан сас, илтӗнсе кайрӗ:

— Лена!..

Хӗрача тӑп чарӑнса тӑчӗ, анчах ҫаврӑнмарӗ.

— Лена, класра уяв...

— Манӑн... васкамалла!

Тум хӑвармалли пӳлӗм умӗнче шӑв-шав. Салтӑнакан та, тумланакан та пур.

— Лена!..

— Пӗчӗккисене малтан ирттерӗр, — йӗрке тума хӑтланать хулне хӗрлӗ хӑю ҫыхнӑ дежурнӑй. Кӗтмех тивет.

— Эпӗ сана ӑсатса яратӑп...

— Тав. Ҫулне хамах пӗлетӗп, Васильев.

— Ҫук, манӑн сана ӑсатса ямалла. Урам кукрине ҫитиччен те пулин. Каласмалли пурччӗ...

— Манӑн... килте ӗҫ нумай, Лӗня.

— Эпӗ сана пырса пулӑшӑп.

— Кӑмӑлу ырӑ сан. Анчах ку ман пӗччен тумалли. Тӑр пӗччен...

— Кирек мӗнле ӗҫе те иккӗн тума пулать. Кайран биологипе пӗрле урок тӑвӑпӑр.

— Эп пӗччен..!

Килне вӑл пахча вӗҫӗпе кайрӗ, ун вӗри куҫҫульне никам та ан куртӑр. Йӗчӗ вара суранланнӑ чунӗ каниччен. Кӑмӑлне ирӗке ярса куҫҫульне шӑлмасӑр хӳхлерӗ...

Кӑчӑр-кӑчӑр ҫӗмӗрӗлсе пырать ура айӗнчи чӗнтӗрлӗ пӑр. Юлашки кунсенче утма ҫул пӗр ирӗлет, пӗр шӑнать. Уй-хир ула-чӑлаланнӑ. Тӳпе хӗррине хӑймине пухнӑ сӗт тӗсӗ ҫапнӑ.

Лена таса юр лаптӑкӗ тупса шкул кутамккине лартрӗ. Пӗр кана ир килнӗ ҫуркуннен шупка илемне сӑнаса тӑчӗ. Юлашки ӗсӗклевпе чӗтренсе сывлӑш ҫаврӑчӗ те тарӑннӑн хаш сывларӗ. Сӑмса тутри илес тесе аллине кӗсйине чикес тенӗччӗ... пӳрнене темле курупка кӗтесси лекех кайрӗ. Шӑрпӑк курупки. Уҫрӗ те сывлами пулса тӑчӗ: лӗпӗш! Чӗрӗ лӗпӗш! Чӑпар ҫунатлӑ чечен лӗпӗш... «Уяв парни», — йӑлтӑр кулчӗ хӗрача тути.

# СӐВӐСЕМ



# Пăр каять

Ача-пăчан
кусĕ алчăранă,
Ача-пăча
алла-аллăн сăнчăрланнă:
Шыв пăтранать —
пăр тапранать!
— Пăрăнăр! — тет пăр.
— Пăрăнăпăр-пăрăнăпăр!

Пĕр шăпăрланĕ
упине çупăрланă:
— Шăпăрт, Карл! Ан хăра! —
Ланкăрт! тăвать карланкăра...

Шăкăрин тăратпăр.
Шатăрт! çурăлать пăр:
пирĕн капăр пăр —
виçĕ уйăх ярăнтарнă пăр!



Çавр ӑнма пуçлатпӑр.
Те çыран шӑвать,
　　　　　　　те çаран,
Те çарран шывра тӑрать пӗр паттӑр:
Курӑнмасть хӑй — сулӑ юхтарать.

Ӑнланмастпӑр: мӗншӗн пӑр тарать?
Е эпир пӑртан таçта таратпӑр?

Ни малалла, ни каялла...
Туссем:
— Анраса каймалла! —
　　　　　　　　　　теççӗ, —
Ура айӗнчен те çыр тарать,
　　　　　　　　　　те çӗр!

— Упра, ана,
　　　тӗп тупруна, — тӑпрана, —
тет те пӗр пичче
　　　　　　темччен тӑрать пӗччен...

Пӑр каять...
Хӗллехи шава лартса каять...
Кайӑксем пире курма килеççӗ,
Чӑвашла чӗвӗлтетсе çӳреççӗ.

## Çамрӑк юрӑç

Атӑл тӑрӑх
　　　шурӑ карап анчӗ.
Карап çинче —
　　　　　концерт паракан çӑ,
тватӑ пӑрӑх,
　　　　　çичӗ параппанччӗ.
Шӑрӑх — ку концерт
　　　　　шав кӗмсӗртетет.
Кансӗр! Шавлӑ — хӑлхана çӗртет!

Пăлханансĕ тăвать
пăрăх калакансĕ.
Эпĕ — «çĕнĕ ăрăвăн ешĕл кăна калчи»,
Ял ачи. Аллăмра — эрешлĕ шăхличи.
(Анраса тăрап: «Атăл тăрăх аннă карапа
çăлтăртан тытап та кăкарап!»)

Куракан та сахал мар!
Кукăрта — ватă кок, арап,
висĕ сараппан... тата эп тăрап,
сар кĕпе, шур шăлавар,
шупăр çиййĕн кантăра.
Хам вăр-вар
шăпăр-шăпăр юхакан тара
Сар аппа саппунĕн
аркипе шăлап,
Сив чир ернĕ пек шаккап шăла,
Юрламашкăн тухмалли çула
кусăмпа висетĕп,
утăм, иккĕ... вуннă... такăнса çĕтетĕп,
Тутана мăкăл-мăкăл тутарап,
Кĕлтуса пăхса тăрать арап...

Висĕ сар капан —
вис сарлака сараппан —
Кăлтăрмач пек ташлама тухсан
Витрĕ хучĕ мана
пĕр купа аркăпа!
Пăлтăр-палтăр çавăрттарчĕç
мана, шăрпăка!..

— Халь юрлать Çтаппан! —
тет тасҫта çӳлте аппа.
Мĕнле янраттарса ятăм:
«Тĕлĕрет пек Атăл!»

Тĕлĕрмест çав Атăл...

Хутлă-хутлă аркă айĕнче,
Параппан та пăрăх туйĕнче
ялтан килнĕ пĕчĕкçĕ артист
ниепле те кураймарĕ чыс...

Темех мар, ўсем-ха тепĕр шит!
Шупашкарăн шăпăрт шăпăрçи
Хăюлантăр ман çине пăхса —
Шăрантарăп юрă пуç ухса!



## Кахал

Тĕнчере кахал сахал.
(Мĕн туса ларас ахаль?)
Çавăнпа та кахала
Асăрханса пахала.

Тен, вăл таврара пĕрре?
Е «Хĕрлĕ Кĕнекере»?
Тен, шăпи ун чăннипех
Динозаврăнни пек?

Ăна савăр! Пĕттĕр-им?
Чи юратнă теттĕре
Кайса парăр выляма
Паянах çав наяна.



Сарса парӑр сар сарма
Ҫемҫен сарӑлса ларма.
Сӗнӗр тутлӑ кучченеҫ —
Шӑл ҫемми пулинччӗ ҫеҫ.

Юраймастӑр урӑхла,
Уншӑн урли — тӑрӑхла...
(Мӗн тӑвар-ха лӳппере?
Вӑл пилӗк хут иккӗре!)

Тӳрӗ пилӗк, тусӑмсем,
Улшӑнмӗ-ши ту сӗнсен?!
Тӑвах мар тӑк — тӑвайкки,
Йӗлтӗрпе ик патакки.

Тапалантӑр ҫӳлелле
Ача купин хӳрилле,
Ярӑнмашкӑн юратсан
Аштӑр юра ҫынпа тан!



## Пӗр ача

Пирӗн ҫемьере ялан
Йалт пайланать виҫ пая.
Кунне ҫӗр хут тав тӑван —
Эпир виҫҫӗн пӗртӑван.

Виҫҫӗн — виҫҫӗнех, аван,
Хулла мар, вулла аван!
Виҫҫӗн туртан пӗр лава.
Тӑр пӗччен тӗк мӗн тӑван?

Кӳршӗсен ав пӗр ача —
Каснӑ лартнӑ йӑвача.
Тумӗ пурҫӑн та парча,
Ӑпӑр-тапӑр — пӗр арча.

Сунтӑх тулли шӑккалат —
Тунсӑх ҫук пек пӑхкалать.
Пылак тавраш — икӗ шкап,
Яка пыр тиркет яшка.

Тус пуласшӑн пирӗнпе —
Яшка лартрӗ тирӗкпе.
Шӑккалачӗн хупӑлчи
Шӑккӑлт! кӑна хупӑнчӗ...

## Кӑшман

Ҫурхи ҫӗр кушнӑ-кушман
Акрӑм пахчана кӑшман.
Мӗн сӗнем те канашлам?
«Ҫитӗн, — терӗм, — каш кашла!»

Вӗт ҫум курӑка тӑшман
Вырӑнне хуман тус ман,
Кунӗн-ҫӗрӗн тӑрӑшман —
Пурпӗр парӑнман кӑшман.



Мухтанас килет кăшт ман,
Кашласа ӳсет кăшман!
Ытлашши пит тăтăш ма
Шăварас сана, кăшман?

Качака та кăшламан,
Кăшлама та шутламан.
Ашкăрса ӳсет — йăшман
Тĕлĕнтермĕш çак кăшман.

Тӳсмелле мар шăрăхра
Ӳссе кайрĕ хăрушла.
Ма куштан-ши ку кăшман?
Кама чĕннĕ тупăшма?

Эп ăна нихçан хушман
Пăрушка пек ӳт хушма.
Хушрăм ăна çитĕнме —
Тупрăм ăнăçу тĕлне!

Пуçра çĕнĕ шухăш ман:
Хăй пек шуххăн тăрăшма,
Чи вăйлипе тупăшма
Хама вĕрентет кăшман!

Килес çул çак вырăна
Арпус акас пĕр ана,
Асăрхантăр Аçтăрхан —
Ӳсет чăн-чăн Маçтăр хан!











# Хăй хуçа!

Хĕвел
канăç памасть ман ăса:
мĕншĕн анса ларать анăçа,
тухăçран тухать?

Пĕрре кутăнла ту-ха,
хĕвел,
анăçран тух,
тухăçра ан!

Хутла та хутла
апла та капла!..

— Аюк, — тет хĕвел куçран, —
Апла та анăçра анăп,
Тухăп тухăçран.

Уншăн пурĕ — ик ен.
Хăй ят панă иккен
анăçпа тухăça —
хăй хуçа!

Пĕчченех шухăшлатăп темччен,
Ман мĕне ят парас-ши, тĕнче?..

## Ыйхă тăмани

Ыйхă тăмани
Вĕçсе килчĕ те — ларать
Куç хăрпăкĕ çинче.
Кăнтăр кунĕнче!..
Кашта çинчи чăхла!..

Хăвах чухла —
Эп тăни-тăманни,
Мĕн туни-туманни
Тăманашăн нимĕн те мар!
Ларать — янă тейĕн тымар.

Лартăрин!
Тĕлĕке манпа тан куртăрин!
Эп вĕçем унпа тан — эп тăри!



## Каникул пуçланчĕ!

Алтăр Çăлтăр алтăрне тăкать —
Кĕмĕл тĕсĕ çапрĕ кантăка,
Паянтан эпир каникулта!
Çавăнпа чунпа ирех шкулта:
Хатĕрлерĕмĕр тăнкка-тăнкка
Пĕр эрнелĕх пысăк кутамкка.
Йыхăрать пире вăрман, çаран,
Пулăра ларма чĕнет çыран.

Кан та кул!
Кул та кан!
Кан та кул!
Ма тесессĕн пирĕн каникул.

# Ялтрав



Пĕлместĕп, тахăш самантра
Ялтрав çиçсе илет манра —
Янрав пулса ылмашăнать,
Январь варри пулса шăнать,
Вара... нăрлать мăран шăна,
Вара тавралăх ăшăнать —
Пӳрте кĕтмен кĕтрет кĕртет,
Тем тĕрлĕ тем пулса иртет...

Йăвасерен — чĕр çăмарта,
Пур ыра юрă — çăварта.
Ялтрав ялтранă самантра
Çеçке çурать... ахаль кантра!
Хĕлли-çулли пĕрле çиçет,
Пĕр мăнтăр помидор пиçет
Мачча çинчи мăн çăматра
Ялтрав ялтранă самантра.



Хĕм сăнлă кулă — сăн-питре,
Хĕм сăнлă тулă — уй-хирте,
Мĕн-ма тесен манри ялтрав
Кашни ялти кашни ятра!

Йалт — пĕчĕк-пĕчĕк самантра!
Хĕвел! Ялан çапла ялтра,
Ялти мĕнпур ача-пăча
Кичем ан лартăрччĕ пачах.



# Хут пӑрахут

Хут та хут! Пур ҫӗрте те хут!
Хӑтӑрт-хӑтӑрт саслӑ хытӑ хут.
Хачӑпа хутларӑм тӑхӑр хут:
Эп хутран хӑтласшӑн пӑрахут.

— Хут та хут! Пур ҫӗрте те хут! —
Хӑтӑрать атте ҫӗр пӗрмӗш хут.
Асатте хута кӗринччӗ хуть!
Е хутран пулминччӗ пӑрахут...

— Хут хакне пӗлмен пӗр пӑхӑр хурт
Йӑлт ҫисе яринччӗ пӗреххут! —
Хӑтӑрать анне ҫӗр пӗрмӗш хут.
Асанне хута кӗринччӗ хуть!

Хут та хут! Пур ҫӗрте те хут!
Хӑтӑрсан-хӑтӑрмасан та — хут!
— Хӑтӑрт-хӑтӑрт кас та, виҫ те турт, —
Калаҫатӑп хам хампа пӗр пӳрт.

Хутлатса тухатӑп тепӗр хут.
Йӑлтӑркка сӑратӑп,
— Ҫутӑ ҫут!
Тинӗсе тухмашкӑн хатӗр Ҫурт —
Тӑхӑр хутлӑ хӑтлӑ пӑрахут.

Асатте те савӑнать унпа,
Асанне те мухтанать манпа.
Аттепе анне те лӑп кӑна.
Хут илме каятпӑр лавккана!



# Хура хур

Мёскер пулнӑ ку хура —
Шап-шур тёкё хуп-хура.
Хура хурӑн — пёр хурав:
«Харсӑрлантӑм пухура...»

Тёрёс сӑмах калакан,
Хӑрамасӑр какалан!
Хура хурӑм, ан хурлан.
Харсӑрлан та — ан сӑрлан.



# Пулӑ шӳрпи

— Пӑла хёрне
пулӑ тытма каяс!
Хапӑл-и?
— Хапӑл! Хапӑл! —
терё пёртен-пёр Павӑл.

Таврӑнчё пулӑпа вӑл:
— Сётел тавра
шӳрпе ҫиме ларас!
Хапӑл-и?
— Хапӑл! Хапӑл!
Кашӑк тытрёҫ
Хӑпӑл-хапӑл.

— Хапӑл пулсан ушкӑнпа
шӳрпе ҫакар хуранпа.



# Лиска йытă

*Мыскара*

Лиска йытă пит кăра,
Куçĕ тулли мыскара!
Хăрах ури Мускавра,
Тепри шурă пуставра,
Тата тепри чустара,
Тăваттăмĕш тустарать
Тĕнчери пур тусана.
Кăкарас — асту сана!
Яхăнне те пыртармасть,
Пулса тăрать кăлтăрмач
Анчăкне пĕле тăркач —
Çавра çил çӳрет пĕр лаç!
Ури-ури! Çавра çил
Чуптарасшăн катаччи:
Ĕнтĕ лаç та çаврăнать,
Ĕнтĕ пуç та çаврăнать,
Тĕртсе ячĕ çаврана
Уçлăхри пур таврана!
Кам та кам курман ăна —
Юри перет курмана.
Пĕр сăмах ун: хам! та хам!
Мĕн ăсти-ши хăй? — Такам…
Хам! тесе вĕре-вĕре —
Сассăр юлчĕ сивĕре.







# Кăсăя



«Хура çăкăр сырăша
Хурар», — терĕм Çеруша.
Кăсăк тумлă кăсăя
Астивмерĕ ку сăя:
«Ку — суя!» та «Ку — суя!»
Ĕнтĕ кайтăр-им сая?

Хуравларĕ пĕр çерçи:
«Хура çăкăр — хир шăрши!
Маншăн сиплĕ вăл, чи-чи!
Хăрамасăр çи те çи!
Вăрман кайăкĕсене
Чарнă хурине çиме».

# Шапăлкка шапа



Пĕр шапăлкка шапа
Ăшăпа ăшăрханă —
Шампăртатма шутланă лупашкара,
Шампăртăк-шампăртăк!..

«Тăрă шывра курас тăк кăлтăк
Шăнкăравлас Шупашкара», —
Тăрăшсах пăшăрханнă
Çав шапăлкка шампа.

Шампăртатнă, шампăртатнă...
Шапа шухăшне
Çăлтăр татнă:
«Тăп-тăр çăлăн шывне
Кам пăтратнă?»
Шăпăрт пулнă шапа.
Шапăлккан çапларах шăпа.

# ТУПМАЛЛИ

**Калавсем** . . . . . . . . . . . 3
Ăстиçук . . . . . . . . . . . 4
Çăкăрпа сахăр . . . . . . . . . 7
Ахтар Арăм Карчăк . . . . . . . 14
Чуччу сикни . . . . . . . . . . 24
Уяв парни . . . . . . . . . . . 28
**Сăвăсем** . . . . . . . . . . . 33
Пăр каять . . . . . . . . . . . 34
Çамрăк юрăç . . . . . . . . . . 35
Кахал . . . . . . . . . . . . 37
Пĕр ача . . . . . . . . . . . 38
Кăшман . . . . . . . . . . . . 39
Хăй хуçа! . . . . . . . . . . . 41
Ыйхă тăмани . . . . . . . . . . 42
Каникул пуçланчĕ! . . . . . . . . —
Ялтрав . . . . . . . . . . . . 43
Хут пăрахут . . . . . . . . . . 44
Хура хур . . . . . . . . . . . 45
Пулă шӳрпи . . . . . . . . . . —
Лиска йытă. *Мыскара* . . . . . . 46
Кăсăя . . . . . . . . . . . . 47
Шапăлкка шапа . . . . . . . . . —

75.00




*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего школьного возраста

**Марина Федоровна Карягина**

*Ҫӑкӑрпа сахӑр*
*Самый вкусный гостинец*

Рассказы и стихи

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л.Федорова*
Художник *А.И. Алексеев*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *Э.В. Шельтямова*
Компьютерная верстка *Е.В. Васильевой*

+12 Информаци продукцийӗн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 10.04.18. Формат 70x100 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 3,87.
Тираж 1000 экз. Заказ № К-3451. Изд. № 16.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.

ISBN 978-5-7670-2695-1


Чӑваш
кӗнеке
издательстви